КНИГОХРАНИЛИЩЕ

ПИРЁН ХРЕСТЕНСЕН

# Германи революцийĕ

ÇИНЧЕН ПĔЛСЕ ТӐМАЛЛА.

Ф. Н. Сергеев куçарса хатĕрленĕ.

Центральное Восточное Издательство при Н. К. Н.

МОСКВА—1923.

Пӗтӗм тӗнҫери пролетарисем, пӗрлешӗр!

9(43)
П28

КНИГОХРАНИЛИЩЕ

ПИРӖН ХРЕСҪЕНСЕН

# ГЕРМАНИ РЕВОЛЮЦИЙӖ

## ҪИНҪЕН ПӖЛСЕ ТА́МАЛЛА.

---

**Ф. Н. Сергеев** куҫарса, хатӗрленӗ.

ПРОВЕРЕНО 1936 г.

14092

**Центральное Восточное Издательство при Н. К. Н.**
МОСКВА—1923.

Главлит № 14267. Тираж 2000 экзем.

Типография „Красный Восток“. Никольская, 10, во дворе.

# ГЕРМАНИРИ ЁҪҪЕМ.

## Хресҫенӗн Германҫи революцийӗ ҫинҫен лайӑх пӗлсе тӑмалла.

Германҫири халҫхи ӗҫҫем ҫинҫен провӑлӑксӑр телеграф тӑрӑх пур хуласене те ҫасах хыпар ҫитсе тӑрай; йалсене вӑл хыпар ҫас ҫитмест. Хуласенҫе пурте хаҫат вулаҫҫӗ, тӗнҫере мӗн пулнине тепӗр кунах пӗлеҫҫӗ. Йал ун ҫинҫен ик-виҫ уйӑхран тин илтет. Хӑш йала хаҫат нихӑҫан та пымасӗ, ун пек йалсем ҫын сӑмахӗпе анҫах пурӑнаҫҫӗ. Ҫын сӑмахӗ ҫас-ҫасах йунӑш йе ултавлӑ пулай. Ҫавӑнпа йал тӗттӗмре пурӑнай: ӑҫта, мӗн, йепле пулнине пӗлмест.

Европӑ варринҫе, унӑн ҫӗринҫе, пӗр аслӑ патшалӑх пур. Унӑн промышленнӑҫӗ хӑватлӑ; унта утмӑл мӗлйуна йахӑн ҫын пурӑнай, пурте вӗсем ҫыру пӗлеҫҫӗ. Ҫав утмӑл мӗлйунлӑ халӑх халӗ пӗтес патне ҫитнӗ; пирӗн хресҫенсемпе ӗҫлекенсем пулӑшмасан, вӑл пӗтме те пултарай.

Ун ҫинҫен пирӗн хресҫен пӗлет-и?—Ҫук. Ӑна пӗлме кирлех, мӗншӗн тесен пайан Германҫи халӑхне пӗтерме тапӑннӑ тӑшман, ыран пирӗн СССР халӑхӗсене тапӑнма пултарай. Пирӗн Тампов хресҫенӗ, йе ҫӑваш ҫынни Германҫийе шухӑша та илмест, ыран хӑйне пӗр-пӗр йӑнӑрал пуса пӑрахма та пултарай. Ун пек ӗҫҫем пирӗн пайтах пулҫӗ. Англи, Францй, нимӗҫ ҫарӗсем, тата ыттисем те Колчакпа, Деникинпа, Врангелпе, Юденичпа тата ытти шурӑ йӑнӑралсемпе пӗрле пире нумай суранлантарса пӗтерҫӗҫ, вӑл сурансем пирӗн халӗ те тӳрленсе ҫитеймен. Ҫавӑнпа хресҫенсем пурте Германҫири ӗҫҫем ҫинҫен, унти революци ҫинҫен пӗлсе тӑрас пулай. Пирӗн кӳрше вут хыпнӑ, ун патне вӑрӑ кӗнӗ. Пирӗн хресҫен нимӗн тумасӑр пӑхса тӑрсан, вут ун ҫуртне те йарса илӗ, вӑрӑ та ун патне кӗрсе ӑна ҫемйипех пӗтерсе пӑрахӗ.

## Ĕлĕкхи Германџи, Вилгелм Германџийĕ.

Германџипе Германџийĕн уйрăмĕ пур. Пирĕн ĕçлекенсемпе хресџенсем вăрçăџџенхи, революциџџенхи Германџи йепле пулнине пур те пĕлеççĕ. Вăрçă хыççăн, революци хыççăн пулнă Германџи урăхла. Улпутсенџен, капиталиссенџен хăтăлсан Германџи тата урăхла пулĕ.

Вăрçăџџенхи Германџи мĕнле-џĕ? Европă варринџе вăл пит пысăк саралса выртаĭџĕ. Унăн хисепĕ çук хапрăк-савăтџĕ, улпут именисемџĕ, темиçе çĕр хулаџĕ, вĕçĕмсĕр џукун-çулџĕ, пур йенпе те шăрт пек штык тăратнăџĕ: тулалла—йут çĕрсене йарса илсе çаратма, шалалла—ирĕклĕхшĕн пăлханакан ĕçлекенсене пусарма. Унăн пуçлăхĕ Вилгелмџĕ. Ун тавра кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе баронсем, çĕрулпуџĕсемџĕ, аслă вырăнсене вăл улпутсемпе баронсене анџах лартаĭџĕ. Африкăра та, Азире те, ытти çĕрсенџе те Германџи çарĕсем тĕрлĕ халăхсене çаратса вĕсене Вилгелме пăхăнтараĭџĕç. Уншăн Вилгелме пĕр сăмах џĕнекен те пулмарĕ, мĕншĕн тесен влаç пур çĕрте те вăрă-хурахсен алинџеџĕ, вĕсем тĕнџене уйăрасси çинџен анџах шухăшлаĭџĕç.

Тĕнџери лайăх çĕрсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе уйăрайманнипе вăрă-хурахсем вăрçă тапратрĕç; темиçе мĕлйун хресџенпе ĕçлекенсене йун айне путарса пĕтерџĕç. Вилгелмпе унăн йыттисемшĕн темиçе мĕлйун çын хирĕлни, хисепĕ çук халăх пурлăхĕ пĕтни мĕн вăл? Уншăн çав темиçе мĕлйун çын вилли çинџе хăйĕн влаçне тĕреклентерессси анџах кирлĕ пулнă. Германџи касармисенџе ултав сĕрĕмĕпе ăнран кайнă нимĕç салтакĕсем «тĕнџе пуçлăхĕ Германџи пултăр, Германџи», тесе анџах йурласа çӳретџĕç.

Ĕлĕкхи Германџийе пĕлекен хресџенсем халĕ те пит нумай: нумайĕшĕ вĕсем Германџире тыткăнра пурăнџĕç, нумайĕшĕ нимĕç улпуџĕсен çĕрĕсем çинџе, нимĕç капиталисĕсен хапрĕкĕсенџе асапланса ĕçлесе пурăнџĕç. Çав ĕлĕкхи Германџи пур патшалăхри ĕçлекенсемшĕн те пит хăрушă тăшманџџĕ. Нимĕç улпуџĕсемпе капиталисĕсем 1848 çула нихăçан та манас çук. Вăл çул ĕçлекенсемпе хресџенсем пĕтĕм Европăра пит хытă пăлханнă, çавăнпа ăна пуршуйсем «ухмахланнă çул» тенĕ. Нимĕç улпуџĕсемпе капиталиссем татах çавăн пек революци пуласран хăраса тăнă. Мĕншĕн тесен Германџи пролетарисем хăватланса, пуршуйсен вăйĕ џакса пынă, халăх хуçайствине те вара пуршуйсем малалла çĕклесе йама пултарайми пулнă.

Германџи патши Вилгелм пур капиталиссен, пур улпутсен, пур

патшасен тусĕ пулнă. 1905 çулта, январĕн 9-мĕшĕнҫе, Питĕрти ĕçлекенсене пере-пере вĕлерсен, пирĕн патшалăхра революци тапранҫĕ; хресҫенсем улпут именисене çунтара пуçларĕç. Вара Микулай патша хăйĕн пиҫҫĕшне, Вилгелм патшана, çыру йанă. Вилгелм ăна пулăшма пулнă. Ҫăнах та ĕç шала кайнă пулсан, Вилгелм хăй пек йун ĕçекен Микулайа пулăшма хăйĕн пулкисене йанă пулĕҫĕ. Анҫах Микулайăн хăйĕн йыттисем те çителĕклĕ пулҫĕç; халăх та ун ҫухне ытла тĕттĕмҫĕ: ĕçлекенсемпе хресҫенсене вăл Вилгелмсăрах çĕнсе пăрахрĕ.

Çапах та Вилгелмпе Микулай 1914 çулта пĕр-пĕрне хирĕç хăйсен çарĕсене йаҫĕç. Мĕншĕн? Пĕрне-пĕри тăшман пулнăран-и?— Çук. Вĕсем хакне килĕшеймен; çавăнпа. Ун ҫухне пĕтĕм тĕнҫери капиталиссем икке уйăрăлнă, ĕçлекенсемпе хресҫенсене хăйсемшĕн çапăçма тапратнă. Англи, Франци, Америк, Япоҥи капиталисĕсем пирĕн ĕçлекенпе хресҫен йунĕшĕн Вилгелмрен хаклăрах панă. Вара Микулай союçниксемпе пĕрле темиçе мĕлйун ĕçлекенпе хресҫене Вилгелма хирĕç тапратнă.

Çав вăрçăран епĕр 1917 çулта революци туса тухрăмăр. Вилгелм ун ҫухне хăватлăҫĕ; пуршуйсенҫен пуçне, ăна унăн лакейĕсем, Германҥири социал-демократсем, пулăшаҫҫĕç. Пирĕн ĕç пит наҫарҫĕ: халăх йухăнса çитнĕҫĕ; çарă халран кайнăҫĕ, хăй йунĕ капиталиссемпе улпутсемшĕн тăкăннине курса тăраҫĕ. Ĕçлекенсемпе хресҫенсем вăрçа пĕтерешĕн пулҫĕç. Епĕр пурне те, пĕр-пĕрин çĕрне тимесĕр, никама та пусмăрламасăр, килĕшу тума ҫĕнтĕмĕр. Вилгелм пирĕнпе килĕшӳ тума турĕ те, анҫах Брестра тунă договор тăрăх пирĕн лайăх çĕрсене катса илҫĕ. Çитменнине тата нимĕç йăнăралĕсем Краснова пулăшрĕç, Скоропадскийе Украинăна çăварăхлама, тĕрĕк çарĕсемпе Грузи меньшевикĕсене Кавказа пусмăрлама пулăшрĕç. Çавăнтан ĕнтĕ акă мĕн пллă: Германҥире улпутсем çĕнтерсен, вĕсем татах Вилгелма патша тăвĕç, 1918 çулта Германҥи революцийĕ çурса пăрахнă Брест договорĕ тăрăх пирĕн çĕрсене илĕç, пире хисепĕ çук укçа тӳлеттерĕç.

Брест договорĕ нимĕç çарне çăлаймарĕ, унăн ĕмĕрне кăшт анҫах тăсрĕ. Нимĕç çарне ҫасах пĕтерҫĕç, вара Вилгелм та пĕтрĕ.

## Вăрçă хыççăнхи Германҥи.

Америкăн, Англин, Францин пĕрле тар та, тимĕр те, ылтăн та, йун та Германҥинҫен нумайрах пулнă, Вилгелм çарне вĕсем çĕмĕрсе пăрахрĕç. Вăрçă йывăрлăхĕ пур патшалăхсенҫе те—çĕнекеннисенҫе

те, айала пулнисенҫе те — ĕҫҫыннисем ҫине килҫĕ. Германҫирри ĕҫҫыннисем хăйсен патшине, Вилгелма, вăрҫă тапратнăшăн ырăнтан кăларса пăрахрĕҫ.

Германҫирри социал-демократсем (пирĕн меншевиксемпе эссерпекисем), улпутсемпе капиталиссене итлесе, Вилгелма ҫĕрĕ хăварҫĕҫ, ăна тата, сарăлса пурăнмалăх, ĕҫлекенсен тăшманĕсене пулăшмалăх, темĕн ҫухлĕ укҫа паҫĕҫ. Германҫире вара Францири пек республикă пулҫĕ.

Ĕҫлекенсем Германҫире, пирти пек, канашшем тăвашшăнҫĕ. Анҫах социал-демократсем, улпутран тухнă офицерсемпе пĕрле пулса, ĕҫлекенсене хирсе пăрахрĕҫ; вĕсен пуҫлăхĕсене, Карл Либкнехтпа Роза Люксембурга, вĕлерҫĕҫ; сутйесем вĕсене вĕлерекенсене, нимĕн тумасăрах, ирĕке кăларса йаҫĕҫ. Ҫапла Германҫире ĕҫлекенсемшĕн нимĕн ҫăмăллăх та пулмарĕ. Ҫĕрпе хапрăк-саватсем улпутсемпе капиталиссен аллинех йулҫĕҫ. Капиталиссем социал-демократсене министрсене кӳртсе, вĕсене хăйсен прикащăкĕсем турĕҫ.

Версаҫти килĕшӳ тăрăх, Антантă (Франци, Белги, Англи, Итаҫи, Америк) капиталисĕсем Германҫи тирне сӳме тытăнҫĕҫ. Германҫи Франципе ытти патшалăхсене, вăрҫă расхутне тӳлемешкĕн, темиҫе мĕлйарт ылтăн пама пулҫĕ. Вăл ылтăна улпутсемпе капиталиссенҫен пухма тивĕҫҫĕ, мĕншĕн тесен Вилгелм вĕсен ырăлăхĕшĕн вăрҫă тапратнă, вара Германҫи вăл парăма тӳленĕ те пулĕҫĕ. Анҫах капиталиссемпе улпутсем хăйсен мулне кăшт та ҫакарашшăн пулмарĕҫ; ҫавăнпа мĕн пур парăм, вăрҫăн мĕн пур сийенĕ ĕҫлекенсем ҫине килҫĕ. Вăрҫăра мĕлйун ытла вилсе пĕтнинҫен пуҫне, ҫырмипе хăйсен йунне тăкнинҫен пуҫне, вĕсем тата Англи, Франци, Германҫи капиталисесемшĕн йӳн хакпа асапланса ĕҫлесе пурăнмалла пулҫĕҫ.

Ҫав хурлăха тӳсеймесĕр, ĕҫҫыннисем темиҫе хут та тапранса пăхрĕҫ. Анҫах Германҫи меншевикĕсем офицерсемпе, улпутсемпе, капиталиссемпе пĕрле пулса ĕҫлекенсене йаланах йун айне пу-тарса пыҫĕҫ.

Хăйсен тупăшĕсемшĕн анҫах тăрăшакан капиталиссем вăрҫăпа йухăннă халăх хуҫайствине ҫĕклеймерĕҫ. Хапрăксемпе савăтсем хупăна пуҫларĕҫ. Ĕҫҫĕр йулакансем йышлăланса пыҫĕҫ, ҫиме хакĕ таҫта ҫитех ӳссе кайрĕ. Вара ĕҫлекенсем хапрăксемпе савăтсенҫе комитетсем тăва пуҫларĕҫ; ҫпекуҫантсене, хапрăк-савăт хуҫисене тишкĕрме тытăнҫĕҫ. Вара капиталиссемпе меншевиксем татах ĕҫлекенсене хĕсĕрле пуҫларĕҫ.

Çапах та Карл Либкнехтпа, тата Роза Люксембургпа пĕрле ĕçлекенсене хăтарма, Германҗире Совет ирĕкĕ тума тăрăшнисем çапăçма пăрахмарĕç; вĕсем Германҗи комунисĕсен партийĕ турĕç. Вăл партире халĕ çур мĕлйун җлен. Пурте вĕсем йе çапăçса писнĕ ватă революционерсем, йе пулас Германҗишĕн вилме çунса тăракан çамрăксем. Çав парти пире те пит нумай усă турĕ. Германҗире (тата ытти патшалăхсенҗе те) комуниссен партийĕ пулмасан епĕр тен пĕтнĕ те пулăтăмăр. Тăшмансем пур йенҗен те сырса илнĕ вăхăтра пире çав туссем анҗах пулăшрĕç. Пире пусма çĕçĕ çĕкленĕ Франци аллине, йе ыттисен аллине вĕсем сирсе йаҗĕç; Германҗи урлă пире хирĕç вăрçă хатĕрĕсем туртарма памарĕç. Ытти патшалăхсенҗи ĕçлекенсем те пире пулăшрĕç, çапах та Германҗи ĕçлекенĕсем җулех пулăшакан пулмарĕ. Мĕншĕн тесен Германҗи ĕçлекенĕсем Раççей канашĕ хăйсен тĕрекĕ икенне лайăх пĕлсе тăраççĕ.

## Хаҗхи Германҗи.

Германҗи çарсăр тăрса йулсан (Версаҗре килĕшнĕ тăрăх, Германҗийе 100 пин рейхсвер (патшалăх çарĕ), тата 200 пин хура рейхсвер анҗах хăварнă), Франци унăн лайăх çĕрĕсене иле пуçланă. Версаҗре килĕшнĕ тăрăх вăл Германҗийĕн тимĕр нумай çĕрне, Саара, илҗĕ. Францийĕн çĕр кăмрăкĕ сахал пулнă. Çавăнпа вăл тата Германҗи хăйĕн парăмне вăхăтра тӳлейменшĕн, унăн кăмрăк нумай çĕрне, Рура йарса илҗĕ. Ун җухне нимĕç ĕçлекенĕсем татах нумай пĕтрĕç, татах вĕсен йунне тăкрĕç. Çапах та вĕсем, француз капиталисĕсемшĕн ĕçлешшĕн пулмарĕç, çавăнпа вĕсем кăмрăк пит сахал кăлара пуçларĕç. Вара Германҗи промышленнăçĕ, ĕлĕкех аманнăскер, тата ытла наҗарланса çитрĕ. Ĕçлекенсене пит йӳн тӳле пуçларĕç, уйăха тенкĕ çурăран ытла тӳлемерĕç. Çавăнпа нимĕççен укçи—маркă—ытла та хăва[illegible] йӳнеле пуçларĕ, ун пек пирĕн тенкĕ нихăçан та йӳнленмен. Вăл [illegible] çакăнтан паллă:

Пĕр долларшăн тӳленĕ:

| | Берлинра маркăсем | Мускавра тенкĕсем |
|---|---|---|
| январĕн 2-мĕшĕнҗе . . . . | 7.260 | 32 |
| апрелĕн 3-мĕшĕнҗе . . . . | 21.100 | 60 |
| йулĕн 2-мĕшĕнҗе . . . . . | 160.000 | 164 |

| | | |
|---|---|---|
| августăн 1-мĕшĕнҫе . . . . | 1.100.000 | 248 |
| ҫенťапĕрĕн 3-мĕшĕнҫе . . . | 9.700.000 | 425 |
| окťапĕрĕн 1-мĕшĕнҫе . . . | 241.000.000 | 842 |
| окťапĕрĕн 6-мĕшĕнҫе . . . | 800.000.000 | 915 |
| окťапĕрĕн 28-мĕшĕнҫĕ . . . | 65.000.000.000 | 1350 |

Ҫапла ĕнтĕ ҫак ҫул пуҫланнăранпа тенкĕ хакĕ 42 хут, маркă хакĕ 9 мĕлйун хут ўкрĕ! Ҫавăнтан ĕнтĕ нимĕҫ хуҫайстви ытла та наҫарланса ҫитни паллах. Унăн тымарне революци анҫах улăштарма пултарať, ăна пурте—ĕҫлекенсем те, хресҫенсем те, капиталиссем те—пит лайăх пĕлсе тăраҫҫĕ.

### Капиталиссем хăйсен пуҫне, хăйсен мулне ҫăлăм тăрăшаҫҫĕ.

Капиталиссемпе ҫĕрулпуҫĕсем тăрăшнă пулсан, Германҫи Францийе парас парăмне такҫанах татнă пулĕҫĕ, хаҫхин пек пĕтес патне ҫитмен пулĕҫĕ. Анҫах капиталиссемпе ҫĕрулпуҫĕсем, хăйсен мулне кăшт та пулин катса, нихăҫан та ĕҫлекенсен пурнăҫне ҫăмăллатас ҫук. Хăйсен тупăшне ҫакариҫҫен, вĕсем Германҫийе 20 хут сутса йама хатĕр. Ҫăнах та вĕсем нумайĕшĕ хăйсен хапрăк-савăҫĕсене сутса йаҫĕҫ; хăшĕ тата, пирĕн капиталиссемпе улпутсем пек, ылтăнĕсене, прилйанҫĕсене, ҫăматанĕсене илсе йут ҫĕрсене тараҫҫĕ.

Киле йулнă улпутсемпе офицерсем татах Вилгелме патша тăвашшăн; Германҫи ҫарне хăватлăлантарса, ĕҫлекенсемпе хресҫенсен пăлхавне пусарашшăн; улпутсен влаҫне тĕреклĕлентерме татах вăрҫă тапраташшăн. Вĕсем хăйсен партийĕ тунă, ăна **фашиссен партийĕ** теҫҫĕ. Ҫав фашиссен партийĕ мĕн пур влаҫе капиталиссен, графсен, баронсен, йăнăралсен аллине парашшăн. Вăл парти ытти патшалăхсенҫи фашиссемпе сăмах ҫўретет, вĕсемпе пĕрлешше вăл пирĕн канашлă Раҫҫейе пĕтерме шухăшлať.

Ҫапла ĕнтĕ, Германҫире революци пуласси, влаҫ улăшăнасси паллах. Революци тума унта пит хĕн, ҫавăнпа унта ҫапăҫу пиртинҫен те хăватлăрах пулĕ. Революцийе Германҫире пурте хатĕрленеҫҫĕ: хăшĕ пуҫĕпе ҫăматанĕсене ҫăлашшăн, хăшĕ ĕҫлекенсен комуниссен партине тĕреклĕлентерешшĕн, хăшĕ тата улпутсен, фашиссен партине ҫийеле кăларашшăн.

Пултăр тесен те, ан пултăр тесен те, Германҫире пролетарисен революцийĕ пулатех. Краштан вăрҫи пуласси те паллах.

## Германҫири пролетарисен хӑваҫӗ.

Ӗҫлекенсем вӑл вӑрҫӑра мӗнпе ҫапӑҫӗҫ? Вӗсен вӑйӗ пысӑк-ши? Кам вӗсемпе пӗр май пулӗ?

Германҫире халӗ ӗҫ ак мӗнле. Нимӗҫ халӑхӗ нумайӗшӗ комуниссен хыҫҫӑн кайнӑ. Ӗҫлекенсен класӗ пӗтӗмпе комуниссене анҫах шанаҭ, йертсе пымалли ҫӗре йалан комуниссене суйлаҭ; ӗҫлекенсем кӑна мар, Германҫийӗн вак пуршуйӗсем те—кӗҫӗнтерех ҫиновниксем, вакрах лавкахуҫисем, булкӑ пӗҫерекенсем—нумайӗшӗ комуниссем хыҫҫӑн пыраҫҫӗ, комуниссем халӗ те вак пуршуйсемпе пуҫтарӑнса революци тапрансаҥ мӗн тумаллине, революци иртсен пур ирӗке те ӗҫлекенсемпе хресҫенсене парсан мӗн тумаллине, ун ҫухне сутуилӳ ӗҫне йепле майа йамаллине, ҫӑкӑр ӑҫтан тупмаллине, тата ытти ӗҫсем ҫинҫен канаш тӑваҫҫӗ. Комуниссем хресҫенсемпе те вӗсенҫен мӗн илме йуранипе йураманни ҫинҫен, вӗсене кӑлӑх сийен тӑвасран сыхланмалли ҫинҫен пухӑнса каласҫҫӗ: епӗр йунӑшнӑ тӗлсене вӗсем хытӑ астуса тӑраҫҫӗ.

Нимӗҫ хресҫенӗсем, пуринҫен ытла ҫухӑннисемпе вӑтаммисем, ӗҫлекенсене пулӑшма хатӗр тӑраҫҫӗ. Ҫапла Германҫире комуниссен сӑмахне, пуршуйсен правитӗлстви вырӑнне ӗҫлекенсенпе хресҫенсен правитӗлстви тӑвас тенине, нумайӗшӗ хапӑл тӑваҫҫӗ.

Ҫар тӗлешӗнҫен те ӗҫлекенсен ӗҫӗ наҫар мар. Пирӗн 1917 ҫулта хӗрлӗ гварди тунӑ пек, кӑҫал ҫуркуннерепех вӗсем хӗрлӗ сотҫасем тӑваҫҫӗ. Хаҫӗ ҫав сотҫасенҫе ҫӗрӗк мӗҫйуна йахӑн сын пухӑннӑ. Малтанлӑха вӑл пит аван. Ҫавӑн пек сотҫасем халӗ кашни кун пулса пыраҫҫӗ. Епӗр хӗрлӗ гвардийе васкаса, йӗркесӗр, ӗҫе пӗлмесӗр тӑваттӑмӑр. Нимӗҫ ӗҫлекенӗсем хӗрлӗ сотҫасене ӗҫе пӗлсе тӑваҫҫӗ; ҫар ӗҫне вӗсене пит лайӑх вӗрентеҫҫӗ. Унтан тата пурте ҫыру пӗлеҫҫӗ, нумайӗшӗ вӑрҫӑра пулнӑ, ҫар ӗҫне лайӑх вӗренсе ҫитнӗ. Ҫавӑнпа ҫав хӗрлӗ сотҫасен хӑваҫӗ пит пысӑк.

Ӗҫлекенсемпе хресҫенсем ҫапла пӗр майлӑ пулсан, Германҫире комуниссен партийӗ хӑватлӑланасси, революци ҫӗнесси паллах.

## Ытти патшалӑхсенҫи ӗҫҫем.

Пирӗн хресҫенсем тата ак ҫакна пӗлсе тӑмалла.

Тӗнҫе вӑрҫи пӗтес ҫухне ӗҫлекенсемпе хресҫенсем нумай тӗлте вӑрҫа пӗтерешшӗн пӑлхана пуҫларӗҫ. Хӑш тӗлте хайсен правитӗлствине те улӑштарҫӗҫ. Малтан хӑраса ӳкнӗ патшасем, улпутсем,

капиталиссем, вӑй пухса Германҫире те, ытти патшалӑхсенҫе те ӗҫлекенсене хӗсе пуҫларӗҫ. Вӑрҫӑра ӗҫлекенсем татах темӗн тӗрлӗ асап кура пуҫларӗҫ.

Италҫире ӗҫлекенсем пӗр вӑхӑтра хапрӑк-савӑтсене хӑйсен аллине илнӗҫӗ. Анҫах, комуниссен партийӗ ҫуккипе, влаҫе короҫ аллинех хӑварнипе, хапрӑк-савӑтсене вӗсен аллинҫен кайала туртса илҫӗҫ. Унтан влаҫе, пуршуйсемшӗн тӑрӑшакан, ӗҫлекенсене хирӗҫ пыракан фашисем илҫӗҫ. Вӗсем хисепӗ ҫук йал ҫунтарса, ҫаратса пӗтерҫӗҫ. Ҫухӑн хресҫенсене те, ӗҫлекенсене те таптаса пурӑна пуҫларӗҫ. Италҫири ӗҫлекенсем халӗ темӗн тӗрлӗ асапланса пурӑнаҫҫӗ.

Версалҫте килӗшнӗ тӑрӑх, Австрийе темиҫе татӑк туса ҫаратса пӑрахрӗҫ. Австрин промышленнӑҫне пӗтерҫӗҫ. Халӗ унта ӗҫлекенсем выҫӑ вилеҫҫӗ.

## Болгарипе ытти патшалӑхсенҫи ӗҫҫем мӗне вӗрентеҫҫӗ.

Болгарире пӗр вӑхӑтра хресҫенсен партийӗ влаҫ илнӗҫӗ; партин пуҫлӑхӗ министр Стамболийскиҫӗ. Вӑл парти мӗншӗн пӗтни ҫинҫен пирӗн хресҫенӗн хытӑ шухӑшлас пулать.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Болгарире комуниссен партийӗ хӑватлӑланса пыҫӗ. Стамболийски вӑл партийе пӗтерешшӗн пулҫӗ. Парламентра хӑй майлӑ депутатсем ҫурри ытла пулнӑран, вӑл хӑйӗн вӑйӗ нумай пулӗ тесе шухӑшланӑ. Комуниссене, ӗҫлекенсене, хресҫенсене хӗсӗрле пуҫланӑ. Вара акӑ мӗн пулнӑ.

Болгари офицерӗсем, пуйансемпе, тата Болгарире пурӑнакан Врангел салтакӗсемпе пӗрле пулса, хресҫен правитӗлствин министӑрӗсене, хуласенҫи, йалсенҫи хресҫен партийӗ лартнӑ пуҫлӑхсене пурне те тытса хупрӗҫ, Стамболийскийе хӑйне вӗлерсех пӑрахрӗҫ. Вара хресҫенсен парти комуниссене тимелле марҫҫине, вӗсемпе пӗр май пулмаллаҫине лайӑх ӑнласа илҫӗ. Комуниссем те, хресҫенсен партине, вӑл хӑйсене тивнӗ пулсан та, пулӑшма кирлӗҫине, ӑнласа илҫӗҫ. Анҫах кайран пулҫӗҫ. Пуршуйсем хресҫенсене пинӗ-пинӗпе персе вӗлерҫӗҫ, вӗсен ҫӗрӗсене туртса илҫӗҫ. Ҫавӑн пек асапа курсан тин комуниссенпе хресҫенсен партийӗсем Болгарире пӗр май пулса ӗҫле пуҫларӗҫ. Ҫакӑнтан ӗнтӗ акӑ мӗн паллӑ: хресҫенсем комуниссемпе ӗҫлекенсем пулӑшшан тин улпутсене ҫӗнме пултараҫҫӗ. Хресҫенсен комуниссемпе, ӗҫлекенсемпе кирек хӑҫан та пӗр май пулас пулать. Халӗ ҫавна хресҫенсем Болгарире кӑна мар,

ытти патшалăхсенҫе те лайăх ăнласа ҫитрĕҫ. Ҫавăнпа ĕнтĕ Америкре те ĕҫлекенсемпе хресҫенсем пĕр парти тунă.

Болгарире халĕ фашиссен правителстви. Пур патшалăхсенҫе те улпутсемпе капиталиссем хăйсен ĕмĕрĕ пĕтсе килнине сиссе тăраҫҫĕ. Ĕҫлекенсемпе хресҫенсене хăйсен аллинҫе тытса тăрашшăн вĕсем темĕн тума та хатĕр. Германҫири ĕҫлекенсем влаҫе хăйсен аллине илме тапранашшăн тăраҫҫĕ. Улпутсемпе капиталиссем вĕсене темĕн тĕрлĕ хирĕҫ пырĕҫ. Мĕншĕн тесен вĕсем, Германҫири ĕҫлекенсем пирĕн канаш Раҫҫейĕпе пĕрлешпе тĕнҫери мĕн пур фашиссене хирĕҫ пыраcса лайăх пĕлсе тăраҫҫĕ. Вĕсем ҫав союса пĕтерсе татах пирĕн пата килешшĕн; Германҫири 20 мĕлйун ĕҫлекенсене хирсе тăкса пирĕн патшалăха ҫĕмĕрсе пăрахашшăн.

Ун пек пуласси паллах. Унсăрăн, мĕншĕн вĕсем, Колчаксен, Деникинсен, тата ытти йăнăралсен правителствине йышăнса пирĕн правителства халиҫҫен йышăнмасăр тăраҫҫĕ? Мĕншĕн, епĕр хамăр ҫарра ҫакарашшăн тăнă ҫĕрте, вĕсем хăйсен ҫарĕсене ҫакарашшăн мар? Пире тапăнашшăн мар пулсан, мĕншĕн вĕсем хăйсен ҫарне ўстереҫҫĕ? Инкекрен пирĕнпе калаҫма килсен те вĕсем хўне ҫул ҫиксе килеҫҫĕ. Тĕнҫенĕн ултăмĕш пайне ҫурлапа млатук йышăнса тăнине фашиссем темĕн тĕрлĕ кураймасăр тăраҫҫĕ. Вăй ҫитсен, вĕсем пире тахҫанах пĕтерпĕ пулĕҫĕҫ. Анҫах Германҫире ĕҫлекенсем тапранни вĕсен аллине ҫыхса тăраŭ. Ҫавăнпа ĕнтĕ пирĕн хресҫенсем пурте Германҫири ĕҫҫене ҫĕрене хываҫҫĕ. Ҫавăнпа ĕнтĕ пирĕн ĕҫлекенсемне хресҫенсем Германҫи ĕҫлекенĕсемпе хресҫенсен ĕҫне асран йамаҫҫĕ. 70 мĕҫйўнлă Германҫи халăхĕ пĕр хирĕҫ тăмасăр хăйне пусма парас ҫук; 20-мĕҫйун Германҫи ĕҫлекенĕ пĕр ҫапăҫмасăрах кайалла ҫакас ҫук. Вăл ҫапăҫăва Германҫи таврашĕнҫи патшалăхсем: Поҫша та, Чехо-Словаки те, Вергри те, Румынҫи те пур те хутшăнĕҫ.

Венгрипе Румынҫире влаҫ фашиссен (улпутсемпе капиталиссен) аллинҫе. Вĕсем пирĕн хресҫенсене хăйсен хресҫенĕсен пурнăҫне кăтарташшăн. Вĕсене Франципе Англи правителствисем хĕтĕртеҫҫĕ. Кăҫал ҫула Англипе Франци йăнăралĕсем Поҫшăн, Румынҫин, Чехо-Словакин, пирĕн таврари тата ытти патшалăхсен ҫарĕсене пăхса ҫўрерĕҫ, ҫарă хатĕрĕ ҫинҫен канашларĕҫ. Ҫав патшалăхсем пурте вăрҫа хатĕрленнине епĕр тĕплĕ пĕлсе тăратпăр.

Пирĕн асаплă ҫулсенҫе (краштан вăрҫи ҫухне) паҫак улпуҫĕсем, шурă йăнăралсем пулăшнипе, Англипе Франци ылтăнĕпе, вĕсен хĕҫпăшалĕпе, Белоруссипе Украинăн нумай ҫĕрне катса илҫĕҫ. Унта пурăнакан халăхсене паҫак улпуҫĕсем патшаран та хытă

хĕсĕрлеççĕ; вĕсене хăйсен ђĕлхипе калаçма памаççĕ. Вăл ĕçе епĕр хутшăнма пултараймастпăр. Çапах та пирĕн Украинапа Белоруссии халăхĕсем пур те çав куна курмалла пуласран сыхă тăрас пулаŤ.

Румыђи йарса илнĕ пирĕн Бессарабинђе те çавăн пекех. Румыђи шантарĕсем улпут йĕркине хирĕç калаçакансене хăшне çакаççĕ, хăшне тĕрлĕ майпа асаплантарса пĕтереççĕ. Бессараби хресђенĕсем крепитлĕ хресђенрен те нађар пурăнаççĕ. Румыђи хăй нимĕн те мар, вăл хăйĕн хуçисем, француз капиталисĕсем, хушнине анђах тăваŤ.

Европăра халĕ тăвăл çывхарса килнĕ вăхăтра, тар шăрши сарăлнă вăхăтра, çав патшалăхсем пирĕнпе вăрçасси çинђен шухăшлаççĕ. Пађак улпуђĕсем хăйсен хаçађĕсем çинђе пĕр пытармасăрах пирĕн Канашшене хирĕç вăрçă тапратасси çинђен, Минска, Киеве, тата ытти хуласене илесси çинђен çыраççĕ.

Çав ĕççене курмасан-илтмесен, хатĕрленсе сыхă тăмасан епĕр пĕтме те пултаратпăр.

Капиталиссемпе улпутсем пире труках пĕтереймерĕç; çавăнпа ирĕксĕрех пире сывлăш çавăрма пађĕç.

Хресђен йулташшем! Сыхă тăрăр! Сывлăш çавăрма панă вăхăт хăçан пĕтессе, тăшман хăçан килсе çапăнасса никам та пĕлме пултараймасŤ.

Тăшман пире сисмен вăхăтра йарса ан илейтĕр тесен, пирĕн йаланах сыхă, йаланах хатĕр тăрас пулаŤ.

## Германђи революцинђен мĕн тухма пултараŤ. Францыпе Пођшă хăратни.

Германђи революцийĕ ырăпа йĕ усалпа пĕтни пирĕн хресђеншĕн пĕр мар. Çавăнпа хресђенĕн Германђи революци йепле пĕтме пултарнине те пĕлсе тăрас пулаŤ.

Француссен правитĕлстви, нимĕççен çарă сахаллипе, вĕсен çĕр кăмрăкĕ кăларакан Рур оплăçне туртса илешшĕн пултăр. Рурта халĕ француссен пысăк çарă тăраŤ. Анђах çарă, йут çĕре илсе, унти ĕçлекенсемпе çапăса пуçласан, саланма тытăнаŤ: салтаксем хăйсене йут çĕре кăлăх илсе пынине, ĕçлекенсене тивсе усал ĕç тунине сисе пуçлаççĕ, вара ĕçлекенсен йенне кайа пуçлаççĕ. Çапла 1918—19-мĕш çулсенђе пире хирĕç йанă француз матрусĕсем карапĕсене çавăрса кайалла Францийе таврăнђĕç. Нимĕç, француз, акăлђан, америк салтакĕсем те çавăн пекех турĕç. Рурта тăракан француз çарĕсем, ĕçлекенсемпе хирĕç тăрса çапăçман пулин те, халех салана пуçланă. Çапăçма хушшан, вĕсем малтан,

капиталиссемшĕн ĕçлекенсемпе çапăçма кирлĕ-ши тесе, темиçе хут та шухăшласа пăхĕç. Рура илесех тесен, Францийĕн Германџи ытти çĕрĕсене те çапă йарас пулаť; уп пек тума Францийĕн çар та çитес çук, çитсен те ăна тума пит хĕн. Германџийĕн халĕ çарă пит сахал. Анџах вăрçă пăтне çитсен, нимĕç ĕçлекенĕсемпе хресџенĕсем çĕр пин анџах салтак тăратмĕç.

Хресџенсен ак çакна манас пулмасť. Халĕ 1918—19 çулсем мар. Ун џухне Франци пире хирĕç хăйĕн çарĕсене йанăџĕ. Ун џухне, хăйĕн çарĕсене шанса, Франци Версаџре Германџийе çаратмалли килĕшӳ турĕ. Халĕ Францире комуниссен партийĕ пур. Вăл Германџи ĕçлекенĕсене пăвма памĕ.

Германџире те комуниссен партийĕ пур. Вăл та вăрçă ан пултăр тесе темĕн тĕрлĕ тăрăшаť. Ытла çийе кĕрекен капиталиссен йыттисене шăмă пăрахса лăплантараť.

Çапах та инкек иртсе кайĕ тесе шанса тăма йурамасť. Германџире революци тапрансан, Франци пăхса тăрĕ-ши вара? Йе тата Поџшăна илер. Вăл Германџийĕн татăкне çăташшăн анџах тăраť. Вăл нимĕççен ĕçне хутшăнмасăр тăрĕ-ши вара? Тăмĕ темеллийех çук. Германџи революцине кӳршĕ патшалăхсем хутшăнмасан епĕр пит савăнăтăмăрџĕ; мĕншĕн тесен, никам та џăрмантармасан, нимĕç ĕçлекенĕсемпе хресџенĕсем халăх хуçайствине, кирек-мĕнле хĕн пулсан та, џасах çĕклесе йарăџĕç. Анџах Франципе Поџшă (тен ыттисем те-и) нимĕççен ĕçне хутшăнмĕç теме шанџăк пит сахал. Пуршуйсем Канаш республикине мĕн тери курайманнине хресџенсем лайăх пĕлеççĕ. Пуршуйсен Франципе улпутсен Поџши хăйсемпе йунашар Германџире Канаш Республики тума нийепле те парапшăн пулмĕç. Вĕсем Германџи ĕçне хутшăнсан мĕн пулĕ вара? Вара вĕсем Германџири ĕçлекенсемпе хресџенсене йун айне путарма тăрăшĕç. Ăна тусан, пире пĕтерме тытăнĕç.

## Çапах та епĕр вăрçашшăн мар.

Ытти патшалăхсем Германџи революцине ан тивџџĕр тесе, епĕр мĕн тума кирлине пурне те тăвăпăр. Нимĕç комунисĕсем, ĕçлекенĕсемпе хресџенĕсем те çаплах шухăшлаççĕ. Йут патшалăхсемпе вăрçă ан пултăр тесе, вĕсем темĕн пама та хатĕр. Француссене кăмрăк кирлĕ. Рурта кăмрăк кăларакан вырăнсене вĕсем çуррине ишсе пĕтерџĕç, хăйсене кирлĕ таран кăмрăк илеймеççĕ. Нимĕç ĕçлекенĕсем, вăрçă ан пултăр тесе, француссене тен кăмрăк парса тăма та пулĕç. Епĕр те хамăр правитĕлствăна вăрçă пуласран мĕн

тума май килнине пӗтӗмпе тума хушӑпӑр; мӗншӗн тесен вӑрҫӑ пулсан пирӗн ытти патшалӑхсемпе суту-илӳ тӑвасси пӗтсе ларма та пултарать.

Халӗ, тӑвӑл ҫӗкленсе килнӗ вӑхӑтра, капиталиссенҫен пурне те кӗтсе тӑмалла. Епӗр капиталиссемпе улпутсене хӑваласа йарсан, капиталиссен патшалӑхӗсем пире блокадӑпа аптӑрата пуҫларӗҫ. Ун ҫухне вӗсем калаҫҫӗҫ: «Канаш Раҫҫейӗнҫен боҫшевик ҫирӗ сарӑлать, вӑл ҫир пирӗн халӑха та йере пуҫларӗ. Аҫӑр, Канаш Раҫҫейне пур йенҫен те хупӑрласа тӑрар: халӑха мӗн кирлине унта илсе ан кӗрейҫҫӗр, унтан та нимӗн те илсе ан тухайҫҫӑр» тетҫӗҫ. Германҫире совет влаҫӗ пуласран вӗсем тата ытла хӑраса тӑраҫҫӗ. Пирӗн ҫинҫен вӗсем темӗн те пӗр елеклесе пӗтеретҫӗҫ. «Боҫшевиксем вӗсем—тискер кайӑксем, Раҫҫейре урамсем тӑрӑх упасем ҫӳреҫҫӗ» тетҫӗҫ. Вӑл сӑмаха ӗненекен те пурҫҫӗ. Нимӗҫсем ҫинҫен апла калаҫҫан никам та ӗненес ҫук. Нимӗҫсем пурте ҫырӑва пӗлнине, пур ӗҫе те ӑстине, вӗсен промышленнӑҫӗ хӑватлине пурте пӗлсе тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та капиталиссем Германҫийе хупӑрлашшӑн, йе пӗтерешшӗн пулӗҫ. Вара пире те пысӑк сийен пулӗ. Пирӗн тӗрлӗ таварсене (тырра, вӑрмана, нефта, тата ыттисене) Германҫийе йамасан, йе Германҫирен пире таварсем кӑларма памасан, пирӗн хуҫайствӑ вӑй илме пултараймасть.

Ҫавӑнпа, Германҫире революци тапрансан пирӗн кӳршӗсем пире хирӗҫ ан тӑҫҫӑр тесе, пире Германҫипе сутилӳ тума ан ҫӑрмантарҫӑр тесе, пирӗн правитӗлствӑ халех тӑрӑшма тытӑнмалла.

Курайман тӑшмансем пире вӑрҫӑшӑн тесе хисеплеҫҫӗ. Нумай пулмаст, Америк ҫенатӑрӗ Кинг Троцки йулташпа калаҫнӑ. Троцки йулташ ӑна тӳрех каланӑ «епӗр вӑрҫашшӑн мар, пуринпе те килӗштерсе пурӑнма тӑрӑшатпӑр» тенӗ.

Ҫапах та пирӗн пурне те акӑ мӗн калас пулать: «Кам та пулин пирӗн революци ырӑлӑхӗсене туртса илсе пире пӗтерме тӑрсан, пирӗн ӗҫлекенсемпе хресҫенсем пур те пӗр ҫын пек харӑс тапранса вилеҫҫен ҫапӑҫма тытӑнӗҫ!»

## Улпутсемпе капиталиссем-фашиссем мӗн тӑвашшӑн.

Германҫире фашиссем, шуррисем ҫӗнтерсе влаҫе хӑйсен аллине илсен мӗн пулӗ? — Вара Германҫире краштан вӑрҫи вӑраха кайӗ. Вӑл вӑрҫӑра кам хӑшин майлӑ пуласси паллӑ.

1846—8 ҫулсенҫе Венгрире хресҫенсем революци турӗҫ; вӗсем улпут-

сенђен хăтăлашшăн пулђĕç. Вара Раççейри улпутсем, Патак Микулай патшапа пĕрле, Венгрийе вырăс салтакĕсене йађĕç. Вĕсем хресђенсене йун айне туса пусарђĕç; пўрђĕсене çунтарса йађĕç.

Çапла, тĕрлĕ патшалăхри улпутсем пĕрне-пĕри тăванăн курнă. Халĕ те çавăн пекех. Нимĕç улпуђĕсем Франципе Пођша улпуђĕсене кураймасăр тăраççĕ; нимĕç ĕçлекенĕсене вĕсем тата ытларах курайманççĕ. Германђире ĕслекенсем совет влаçĕ тума тытăнсан, вĕсем Франципе Пођшă капиталисĕсемпе, пĕр авкана та пулин, пĕр сăмаха килме пултарĕç, совет влаçне пĕрле пулса пĕтерме тăрăшĕç. Вара пирĕн Раççейри совет влаçне пĕтерме тытăнĕç. Германђи улпуђĕсем хăйсен хаçатĕсем çинђе халĕ те çыраççĕ: «Тĕнђене пăсса тăракан канашлă Раççейе пур улпутсем те пĕрле пулса пĕтерме кирлĕ» теççĕ. Тĕрлĕ патшалăха саланса пĕтнĕ Врангел, Деникин, Юденич йыттисем татах пире тулама тытăнасса кĕтсе анђах тăраççĕ. Халĕ вĕсем, Европă пăлхана пуçлансан, калаççĕ: «Кирлĕ пулăпăрха. Европă на пăлханакан ĕç сыснисенђĕн хăтарма, Раççейри ĕçлекенсемпе хресђенсен влаçне пĕтерме, пирех килсе пуççапса йăлăнăçха» теççĕ. Вĕсен шухăщĕ—пире улпутсен çĕрне илнĕшĕн тавăрасси анђах. Шуррисем хăйсен Сербире тухакан хаçађĕ çине çыраççĕ: «Раççейре совет влаçне пĕтерсе йĕрке кўрес пулсан, ăна Раççейрен тарнă шуррисем тăвĕç. Европăран, хĕçпăшалпа укçаран пуçне, нимĕн те кирлĕ пулмĕ. Совет влаçĕпе çапăçасса Николай Николайђпа Врангел хыççăн пыракан вырăссем çапăçĕç». теççĕ

Çапла ĕнтĕ, пирĕн тăшмансем Европă пăлханнă вахăтра татах пире тапăнашшăн. «Есĕр, Францири, Англири, тата ытти çĕрти капиталиссем, пире укçапа хĕç-пăшал анђах парăр, вĕсен тирне сўме хамăрта пултарăпăр» теççĕ. Ĕнтĕ халех вĕсем туман ђыханăн пилĕкне хуçма тытăннă. Халех вĕсем: «Раççейе пырăпăр та, мĕн пур çĕре, мĕн пур хапрăк-савăтсене, мĕн пур влаçе ĕçлекенсемпе хресђенсенђен кайалла туртса илĕпĕр» тесе аллисене йăваласа тăраççĕ. Вĕсен шухăшĕ çавă. Вĕсем пурте, хресђен хуçайстви, хресђең çĕрĕ йенелле пăхса, урнă кашкăр пек, шăлĕсене шаккаса ларaççĕ. Ĕлĕк хăйсем пĕр май ĕççе-çисе, выђаса-кулса сарăлса пурăннине асран пĕрре те йамаççĕ. Мĕнле те пулин вĕсем пирĕн пата çитешшĕн, вара пирĕн виçĕ тире сўсе илĕђĕç.

Анђах пирĕн хресђен Скоропадски ђухне Украинара, Белоруссире, муссаватсем ђухне Кавкасра, Колчак ђухне Уралпа Атăл тăрăх, Чайковскипе акăлђансем ђухне Арханкелскăра улпутсемпе капиталиссем мĕн хăтланнине нихăçан та манас çук.

Пӗр май патак, тӗрме, катӑркӑ, ҫакса йе персе вӗлерӳ. Ан ђӗн, выђӑх! Хресђен прави ҫинђен ҫӑварна та ан уҫ! Улпута хӑратнӑшӑн, ӑна сийен тунӑшӑн пӗтӗмпех тӳле! Пӗђӗкҫеҫҫӗ Финляндире анђах шуррисем 50.000 ҫын пӗтернӗ. Пирте вӗҫем вунӑ мӗђйун пӗтерме шухӑшлаҫҫӗ, ун ҫинђен вӗсем пӗр пытармасӑр калаҫаҫҫӗ.

Пирӗн патшалӑха шуррисем ҫӗнтерсен мӗн тӑвассине хресђенсен пурин те лайӑх пелсе тӑрас ӣулаӣ. Вӗсем улпутсем курнӑ сийене пӗтӗмпе тӳлеттерӗҫ; вӗсен ҫӗрне, именисене кайалла партарӗҫ; патша парӗмӗсене тӳлеттерӗҫ, куланайа тата ӳстерсе йарӗҫ. Вӑл кам ҫине килӗ? Ҫӑхан ҫӑхан куҫне ђавмасӣ. Улпутсем ҫавна пурне те хресђенсен ӗнси ҫине хурӗҫ.

Ҫапла ӗнтӗ пирӗн хресђенсемшӗн Германђире революци ҫӗннипе ҫӗнменни пӗр пулаӣ-и? Пирӗншӗн унта ӗҫлекенсемпе хресђенсен правитӗлстви пулсан та, улпутсен йе фашиссен правитӗлстви пулсан та пӗрех-и? Ӑна тӗттӗм хресђен те пӗр мар тесе калӗ. Пӗр мар пулсассӑн, хресђенӗн пит сыхӑ тӑмалла; кирлӗ вӑхӑтра аллине хӗҫ-пӑшал тытмалла; хӑйӗн правитӗлствине кирек-мӗне те хатӗр тӑма хушмалла.

Пире вӑрҫӑ кирлӗ мар, ӑна епӗр малтах каларӑмӑр. Анђах епӗр хамӑра тиме те памӑпӑр, никам тарҫи те пулмӑпӑр. Пире ирӗксӗр вӑрҫтарсан, парӑнсах тӑмӑпӑр, революци ырлӑхне пӗтерме памӑпӑр. Ҫавна пурте пӗлсе тӑђђӑр!

Епӗр кам тӗрӗспе пынине лайӑх куратпӑр; Германђире революци ҫӗнни пире усӑллине лайӑх пӗлсе тӑратпӑр. Ҫавӑнпа пирӗн кӑмӑл нимӗҫҫен ӗҫлекенӗсемпе хресђенсем йенђе.

Акӑ Германђин пӗр катӑкӗнђе, Баварире, шуррисем тапранђӗҫ, влаҫе хӑйсен аллине илђӗҫ. Вара пур ӗҫрен те малтан, ӗҫлекенсене хӗсӗрлеме тытӑнђӗҫ. Унта хађӗ ӗҫлекенсем шурӑ Венгрири, Финляндири, Румыђири ӗҫлекенсен пурнӑҫне кураҫҫӗ. Вӑл усал пурнӑҫа Гӗрмађипе Раҫҫейри ӗҫлекенсем те курмалла ан пулђђӑр тесе, пирӗн хытӑ тӑрӑшас ӣулаӣ.

## Германђи революцийӗ ҫӗннин усси.

Германђире йе ӗҫлекенсемпе хресђенсем ҫӗнӗҫ, йе шуррисем ҫӗнӗҫ. Шуррисем ҫӗнсен мӗн пуласси паллӑ, ӗҫлекенсемпе хресђенсем ҫӗнсен пирӗн хресђеншӗн акӑ мӗнле усӑ пулӗ. Германђири ӗҫлекенсенпе хресђенсен правитӗлстви ђӑн малтан пирӗн совет влаҫӗпе сойус тӑвӗ (пӗрлешӗ), ӑна ађа та ӑнланаӣ. Германђипе пирӗн патшалӑхра ик ҫӗр мӗђйун халӑх. Ҫав икӗ патшалӑх пӗр-

лешшен, вёсене тёнђере никам та ҫёнейес ҫук. Германђийён промышленнăҫ хăватлă, унта пур ёҫе те машинăпа тăваҫҫё, анђах Керманийён тырă сахал. Пирён машинăсем ҫук, тырă нумай. Германђипе пёрлешшен, пирён те нимёҫҫен те хуҫайстви ђасах ҫёкленсе кайё. Германђи пире машинăсем парё. Ҫёре машинăпа ёҫлесен, пирён хисепсёр нумай тырă пула пуҫлё; вăл тырă хамăра кăна мар, пётём Европа тăрантарса пурăнма та ҫитё. Керманипе пирён патшалăх пёр-перинпе пёрлешшен мён ђухлё ырăлăх пулассине епёр халё шухăшласа илме те пултараймастпăр.

Ҫав союса вак-тёвек патшалăхсем те, хăйсене кам та пулин тивесрен хăранипе, пурте хутшăнёђёҫ. Вара Европăра вăрҫă нихăҫан та пулмё, мёншён тесен вăл союс пит хăватлă пулё, усал куҫпа пăхсах кирек кам вăрҫине те ђарма пултарё. Вăл союс пулăшнипе, асапланса пурăнакан халăхсем пурте ирёке тухса ун ҫумне хутшăнёҫ. Вара Европăри патшалăхсем, Америкри Штатсем пек, пёрлешше союслă пёр патшалăх тăвёҫ. Вăл союса кёрес тийекен кёрё, кёрес теменнине ирёксёрлемёҫ. Вăл союс ҫинђен илтсен, тёнђери халăхсем пурте тапранёҫ; пурте ирёке тухашшăн пулёҫ: асаплă пурнăҫран, пулас вăрҫăран хăтăлашшăн ҫав союса кёме тăрăшёҫ.

## Ҫапăҫассипе ҫёнтерессихённи.

Анђах вăл ёҫе тăвасси ҫăмăл пулмё; нумайђђен хытă ҫапăҫмалла пулё. Нимёҫ ёҫлекенёсем ҫёнсессён те, пурнăҫа майласа йама вёсене пит хён пулё. Нимёҫҫен маркки (укҫи) ытла хăвăрт йўнелсе пырат̆. Ҫёнсен тепёр кунех вăл йўнелме ђарăнмё. Пирти пекех, нимёҫҫен малтанлăха пит хён пулё.

Франци Рура памасăр тăрё, ҫавăнпа нимёҫҫен промышленнăҫё валли кăмрăк тупма пит хён пулё, промышленнăҫ малтанлăха, пирти пек, ђакса пырё. Пуринђен ытла ҫиме тёлешёнђен хён пулё. Германђи хăйне кирлё ҫимелли йапаласен тăватă пайёнђен виҫё пайне анђах хăй тăват̆, пёр пайне ытти патшалăхсенђен кўртерет. Унтан тата Германђире ёҫлекенсемпе хресђенсем ҫёнсен, капиталиҫсен патшалăхёсем Германђийе, пире тунă пек, блокадă тума (йёри тавра хупăрласа таварсем йамасăр тăма) пултараҫҫё. Вара Германђи ёҫлекенёсемпе хресђенсене тата хён пулё. Епёр ун пек блокадăна ҫёнтёмёр. Нимёҫ ёҫлекенёсемпе хресђенсем те, пирён 150 мёђйунлă халăх вёсен майлине пёлсен, ҫав блокадăна ҫёнсе пăрахёҫ.

### Хресҗенсем, сыхă тăрăр!

Хресҗенсем! Есĕр кирек ăçта пурăнсан та, пирĕн ĕç çук тесе ан калăр! Вăл пирĕн ĕç мар тесе ан шухăшлăр! Нимĕнле халăх та халĕ хăй тĕллĕн пурăнаймасть. Вăрçă хыççăн пирĕн хуçайствă халĕ çĕкленсе пырать. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен епĕр Германҗипе сутилў тăватпăр. Саранча пирĕн хирсене пĕтерме тытăннине пурăр та пĕлетĕр. Çав хурта пĕтерекен наркăмăша епĕр Германҗирен илетпĕр. Пĕҗĕкçеççĕ йапала, çапах та çав йапала пулмасан саранча пирĕн хирсене пĕтĕмпе пĕтерне пулĕҗĕ. Германҗипе сутилў тăвасси пире калама та çук кирли çав хурт наркăмĕшĕнҗенех паллă. Германҗисĕр пурăнма пире ытла та хĕн. Германҗийе çухатса машинăсемсĕр йулсан, пирĕн хресҗен хуçайстви пĕтсе ларма та пултарать; машинăсем пулсан, пирĕн мĕн пур хуçайствă çĕкленсе кайĕ. Германҗире улпутсемпе капиталиссем çĕнсен, епĕр те вăйран кайăпăр, пирĕн патшалăх кранĕсем те тăшмансемшĕн уçăлĕç, çăткăн капиталиссемпе улпутсем татах пирĕн çийе вăрçăпа килĕç.

Унтан вара пирĕн хирсене, йалсене, хуласене урăх саранча хуплĕ, вăл җул çине җул та хăварĕ.

Хресҗен! Германҗи революци çумĕнҗе санăн мĕн ĕç пуррине пĕлтĕн-и ĕнтĕ? Пĕлтĕн пулсан сыхă тăр!

---

# ТРОЦКИ ЙУЛТАШ ГЕРМАҤИ РЕВОЛЮЦИЙĔ ÇИНҖЕН КАЛАНИ.

Мускав кĕпĕрнинҗи металлиссен Сиесĕнҗе Троцки йулташ Германҗи революцийĕ çинҗен токлат тунă. Вăл акă мĕн каланă.

Хаҗхин пек ĕççем пин çулта пĕрре анҗах пулаççĕ. Ку таранҗен тĕнҗере пулнă ĕççенҗен җи пысăккисем иккĕ-җĕ: пĕри француссен аслă революцийĕ, тепĕри—Наполеон вăхăтĕнҗе халăх куçни, ун җухне хĕвел анăçĕ йенҗен Мускава та хум килсе çапнă. Халĕ пулакан ĕççем çумĕнҗе çав ĕççем ытла та пĕҗĕккĕ.

Пайанхи кунтан пилĕк çул кайран Германҗи революцийĕ ĕçлекенсен ĕмĕтне тултараймарĕ. Ун җухне ĕçлекенсене йертсе пыракан социал-демократсем влаçе пуршуйсемпе уйăрҗĕç, кайран ăна пĕтĕмпех пуршуйсен аллине паҗĕç. Халĕ Германҗи икĕ çул йуппинҗе тăрать: пĕр çулĕпе кайсан пĕтмелле, тепĕрипе кайсан пролетарисен революцийĕ пулмалла.

## Революци хăçан çĕнме пултарать.

Революци тума виçĕ йапала кирлĕ: промышленнăç хăватлă пулмалла, машинăсем нумай пулмалла, тата ĕçлекенсем вăйлă пулмалла. Малтанхи икĕ йапали Германьире пур. Ĕçлекенсем те унта пит нумай: 60 мĕльйун халăхран 15 мĕльйунĕ хапрăк-савăтсенче ĕçлеççĕ. Ĕçлекенсем социал-демократсене пăрахса комунисен йенне сулăннăçемĕн сулăнаççĕ. Комуниссен партийĕ унта çамрăк. Çапах та революци тума унăн хăвачĕ çитмелле пек туйăнать.

Германьи ĕçлекенĕсем çапăçма хатĕр. Анчах хăйулă çапăçмашкăн, вĕсен хăйсене йертсе пыма пултаракан парти пуррине курса тăрас пулать. Вĕсем халĕ çапăçма тытăнмасăр тăраççĕ, мĕншĕн тесен вăл çапăçу пит хăватлă пулмалла, пуршуйсем йе ĕçлекенсем петмесĕр чарăнас çук.

Хальхи вăхăтра Германьири комуниссен партийĕ уйăхсерен хăватлăланса пырать. Вăл партийе ĕçлекенсем — социал-демократсен хыççăн пынисем те ыттисем те—халĕ нумай кĕреççĕ.

## Германьи саланни.

Германьи французсем Рура илсен салана пуçларĕ. Штреземан [1]) правитĕлстви Франци правитĕлствине пăхăнчĕ. Анчах Франци правитĕлстви хăйне пăхăннă Германьипе калаçашшăн та пулмарĕ, мĕншĕн тесен нимĕççем вăй илсе Францийе пĕтересрен хăрарĕ.

Халĕ Германьире ĕççем ак мĕнле. Фашиссен аллине лекнĕ Бавари Германьийĕн аслă правитĕлствине пăхăнашшăн мар. Баварипе йунашар Саксонипе Тюринги правитĕлствисем комунисемпе сулахай социал-демократсен аллинче (халĕ Саксонипе Тюринги правитĕлствисем те пуршуйсем майлă пыракан сылтăм социал-демократсен аллине лекрĕç).

Германьире икĕ вăй: пĕр йенче—революци тума хатĕр тăракансем, тепĕр йенче—фашиссем, вĕсен хушшинче—ниçталла та кайма пĕлмен вак пуршуйсем, иккĕленекен социал-демократсем. Ун пек аптăраса тăракансем нумай, анчах революци хумĕ вĕсене йалан хăшне сулахайалла, хăшне сылтăмалла çапса йарать.

## Революци çĕнейи, çĕнейми?

Тăшмана çĕнес тесен, ăна çапса ӳкерсе çапăçайми тăвас пулать. Германьири комуниссен партийĕ çавăн пек çапма пулта-

---

[1]) Халĕ Штреземан правитĕлствăран сирпĕнсе тухнă. **Ред—р.**

райӗ-ши? Ӑна татса калама пит хӗн. Ҫапах та ӗҫлекенсен класӗ ҫӗнмелле пек туйӑнаӗ.

Пуршуйсен аллинҭе халӗ 100.000 ҫарӑ (рейхсвер), 135.000 полици, тата фашиссем; фашиссен хӗҫпӑшалта нумай, командирсем те пит лайӑх. Анҭах фашиссем пӗтӗм патшалӑх тӑрӑх саланса тӑраҫҫӗ. Вӗсем хушшинҭе ӗҫлекенсем те пур; ӗҫлекенсем хӗрсе ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра пуршуйсене пӑрахма та пултараҫҫӗ.

Революци йенҭе—хӗрлӗ сотҭасем. Вӗсем миҫи паллӑ мар. Ҫапах та вӗсем пит нумай. Ӗҫлекенсем, хӑйсен тӑшманӗсене ҫӗнмелӗхех, кирек хӑҫан та хӗрлӗ сотҭасем ҫителӗклӗ тума пултараҫҫӗ.

Пайанхи кунтан пӗр-ик ерне кайарах Германҭире ҫапӑҫу пуҫланмалла пекҭӗ. Халӗ ӗҫ улӑшӑнҭӗ.

Германҭире ҫапӑҫу ик тӗлте пулмалла пек: фашиссен майлӑ пыракан Баварире, тата ӗҫлекенсен майлӑ пыракан Саксонипе Тюрингире. Тӗп правитӗлствӑ ӗҫлекенсен сотҭисене салатма хушнине Саксони итлемерӗ. Саксонийе ҫарӑ йара пусласан, социал-демократсем те шикленҭӗҫ, мӗншӗн унта ҫарӑ йаратӑр тесе тӗп правитӗлствӑран ыйта пуҫларӗҫ. Саксонийе ҫӗмӗрни—хӑйсене ҫӗмӗрни пулнине вӗсем лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, Германҭи хумханнӑҫемӗн хумханаӗ. Ӗҫлекенсем те социал-демократсем хыҫҫӑн пыма йӑлӑхса ҫите пуҫларӗҫ. Ӗҫ ӑҫталла кайни пуриншӗн те паллӑ. Ҫапӑҫас вӑхӑт ҫитсе перӗнҭӗ.

## Халӗ ҫапӑҫма аван вӑхӑт.

Германире ӗҫ халхин пек пырсан, влаҫ ҭасах ӗҫлекенсен аллине лекӗ. Анҭах ӗҫ унпах пӗтмӗ.

Германҭи кӳршисем—Франци, Белги, Поҭшӑ, Чехо-Словаки, тинӗс йенҭен тата Англи.

Англи, вӑйӗ пулсан, ӑна революцийе хирӗҫ йарӗҭӗ. Анҭах Англин флоҭӗ анҭах вӑйлӑ. Типӗ ҫӗрте вӑл ӗмӗртенпех наҭар ҫапӑҫаӗ. Нумай пулмаст вӑл пире вӑрҫӑпа хӑратма шухӑшларӗ. Ӑна хирӗҫ епӗр йараплансем тума тытӑнтӑмӑр. Англи тӗрӗкпе Францийе те хӑратаймасӗ. Тинӗс ҫинҭе вӑл вӑйлӑ. Революци тинӗсре пулсан, Англи ӑна пӗтерӗҭӗ, анҭах революци типӗ ҫӗрте пулаӗ.

## Франци мӗн тӑвӗ?

Франци, ухмаха йерсе, революци тӑвакан Германҭийе пӗтӗмпех йарса илес тесен, ӑна 1.500.000 йе 1.700.000 салтак кирлӗ. Ун

ҫухлĕ салтăк Франци халĕ пухма пултараймасӑ. Франци ҫарĕнҫе халĕ 700.000 салтак. Ун ҫумне тата 8—10 ҫĕр пин вăл нийепле те пухас ҫук. Ҫавăн ҫухлĕ ĕҫлекенсемпе хресҫенсем пухас пулсан, Франци пуршуйĕсене хăйсенех усал пулĕ. Ҫапах Франци ăна тума тытăнмĕ темеллийех ҫук. Хăй вилĕмне сиссе, пуршуйсем темĕн хăтланма та пултараҫҫĕ.

### Поҫшă.

Германҫи революцине хирĕҫ Поҫшă та тапранассăн пек туйăнмасӑ. Вăл Германҫи ҫĕрне анҫах катса илме тăрăшĕ, унтан малалла каймĕ пек туйăнаӑ.

Пире йĕри-тавра хĕсĕрленине, тăшман Мускав хапхи патне ҫитнине пурсăр та астăватăр. Епĕр ҫавсасене сартăмăр та, тăшмансем сирпĕнсе кайрĕҫ. Нимĕҫ ĕҫлекенĕсем те ҫавăн пĕк тума пултараҫҫĕ. Поҫшă вĕсене хĕссен, вĕсем те хăйсен ҫавсисене сарма пултараҫҫĕ.

Поҫшă мĕн тăвассине Германҫи ĕҫлекенĕсен анҫах мар, пирĕн те пĕлес пулаӑ.

### Поҫшăпа вăрҫă пуҫи, пуҫми?

Хăш йулташшем калаҫҫĕ: Поҫшăпа вăрҫă пулмаллах, теҫҫĕ. Епĕ ăна шансах каймастăп. Мĕне кирлĕ вăрҫă? Пире вăрҫă кирлĕ мар. Халăх хуҫайствиҫе епĕр халĕ нумайах ҫĕклеймерĕмĕр. Тырă хакне ҫĕклеме, хапрăк-савăтсенҫе тăвакан йапаласен хакне ӳкерме епĕр халĕ вĕренсе ҫитеймен. Пирĕн сурансем тин тӳрлене пуҫларĕҫ. Вăрҫă пирĕн хуҫайствăна пит пысăк сийен кӳме пултараӑ.

Ҫавăнпа пирĕн вăрҫа мĕнле те пулин сирсе йама тăрăшмалла.

Германҫире ĕҫлекенсем хăйсемех ҫĕнтерме пултарĕҫ; ҫарă йарса вĕсене пулăшма кирлĕ мар, хăй пуршуйĕсене хăй вăйĕпе ҫĕнеймен революци шанҫăклă революци мар.

Поҫшă куштанĕсем калаҫҫĕ: «Германҫипе Раҫҫей Поҫшăна хĕстерекен клешҫе». теҫҫĕ. Вăл тĕрĕс мар. Поҫшă хăй пирĕнпе Германҫи хушшине савăл пек кĕрсе ларҫĕ. Ригă хулинҫе епĕр Германҫипе йунашар пулăшшăнҫĕ, анҫах ун пек тума Поҫшă хăй пире памарĕ.

### Йе кĕпер, йе хӳме.

Поҫшă пирĕнпе Германҫи хушшинҫе йе кĕпер, йе хӳме пулма пултараӑ. Кĕпер пулсан, епĕр хакне пĕтĕмпех укҫанăн кăларса

парăпăр. Пире Германțийе çул кирлĕ. Вăл çул пурсăмăра та кирлĕ, ăна хресțенсен пурин те пĕлмелле. Вăл йал кулакĕсене те кирлĕ. Вăл çулсăр пирĕн йал хуçайстви пĕтме пултараť. Поțшăн хăйĕн шухăшламалла: кĕпер пулмалла-и унăн, хўме-и.

Хўме пулас пулсан, Поțшă țăнах та клешțе хушшине лекĕ. Тўррипех калас пулаť: пире вăрçă кирлĕ мар, анțах Европăпа сутилў тума хамăра țăрманťарма памăпăр. Поțшăн пире ирĕксĕрех Европăри краштан вăрçине çарă йарса хутăшмалла тăвас пулмасť.

Вăрçă тапранмасăр пулма пултараť-и?—Пултараť. Епĕ малтанах каларăм: хăш йулташшем вăрçăсăр пулмĕ теççĕ, терĕм. Анțах пирĕн правитĕлствăн ун пек шухăшлас пулмасť. Пирĕн хуçайствăна çĕклемелле, çарра хăватлăлантармалла, йаруплансем нумайрах тумалла. Анțах ăна епĕр вăрçăшăн тумастпăр.

Европăра тăвăл тапранасси пуриншĕн те паллă. Пирĕн вăрçа сирсе йама тăрăшас пулаť. Çавăнпа пирĕн ĕлĕкхинțен вунă хут ытла ĕçлемелле. Германți революци çывхарса килни пирĕн ĕçе улăштармасť.

Германțире революци çывхарса килет. Мĕн тумалла ĕнтĕ пирĕн? Пур ĕçе те пирĕн хăвăртрах, авантарах тăвас пулаť.

Вăрçă пуласах пулсан, вăл мĕншĕн тапраннине, кам айăплине пирĕн ĕçлекенсемпе хресțенсен пурин те лайăх пĕлсе тăрас пулаť. Ытла хыпăнса ўксе пуçа çухатас пулмасť. Ĕç нумай пулĕ, хăрушă тĕлсем те пайтах пулĕç. Пирĕнпе ирĕксĕр вăрçă тапратсан, хресțенсен пурин те, вăл вăрçа пирĕн сирсе йама май пулманнине пĕлсе тăма тивĕç. Вара, кирек мĕн пулсан та, епĕр çĕнтерĕпĕр.

# ГЕРМАНИ ПЛАНӖ.

## I. Германи ҫӗрӗ.

Ку план ҫинҗе вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи Германийе кӑтартнӑ. Вӑрҫӑҗен Германийӗн ҫӗрӗ, колонисене шутламасӑр, 540.857 тӑваткӑл километрҗҗӗ (километр-ҫухрӑма йахӑн). Халӗ унӑн ҫӗрӗ 468.677 тӑваткӑл километр анҗах. Ҫапла Германи хӑй патӗнҗи ҫӗрне анҗах 72.000 тв. километр ҫухатнӑ. Ку шута Франци йарса илнӗ Рур ҫӗрӗ кӗмест. Унтан тата Германи хӑйӗн мӗн пур колонисене ҫухатрӗ. 1913 ҫулта вӑл колонисенҗе мӗн пурӗ 2.952.924 тв. километрҗҗӗ, 13 мӗљйун ҫынҗҗӗ.

## II. Германи халӑхӗ.

1919-мӗш ҫулта шутланӑ тӑрӑх, Германире 59.660.000 ҫын пурӑнаЎ. Ҫӗр ҫынтан нимӗҫҫем—92,5, пољаксем—5,47, ыттисем—2,03.

Ҫитӗннӗ ҫынсем Германире мӗн пурӗ 34 мӗљйун.

Классем тӑрӑх вӗсем ак ҫапла уйӑрӑлаҫҫӗ:

| ӖҪ ЙАҖӖ. | Хуҫасем. | Ҫур пролетарисем. | Тӗрлӗ вырӑнта тӑракансем. | Ӗҫлекенсем. |
|---|---|---|---|---|
| Йал хуҫайствинҗе . | 1.180.750 | 1.275.500 | 190.500 | 7.172.000 |
| Промышленнӑҫре . | 550.000 | 1.200.000 | 1.020.000 | 11.800.000 |
| Сутуилӳре . . . . | 500.000 | 1.000.000 | 1.000.000 | 2.500.000 |
| Килти тарҫӑсем . . | — | — | — | 390.000 |
| Вакатсем, тухтӑрсем, артиссем, ҫавӑн пек ирӗкре ӗҫлекенсем . . . | 500.000 | — | 1.000.000 | 950.000 |
| Нимӗн тумасӑр пурӑнакансем . . . | 1.700.000 | — | — | — |
| Мӗн пурӗ . | 4.430.750 | 3.475.500 | 3.210.000 | 22.750.000 |

Ҫапла ӗнтӗ Германийӗн мӗн пур халӑхне илсен, ҫӗр ҫынтан 38-шӗ ӗҫлекекенсене килет; ҫитӗннисене анҫах илсен, ҫӗр ҫынтан ӗҫлекенсене 66 килет. Урӑхла каласан, ҫитӗннисенҫен виҫӗ пайран иккӗшӗ пурте ӗҫлекенсем.

## III. Германи пайӗсем.

Германире халӗ 15 респупликкӑ, тата 3 ирӗк хула. Вӗсем ак ҫаксем:

| РЕСПУПЛИКӐ ЙАҪӖСЕМ. | Ҫӗрӗ миҫе тӑваткӑл километр. | Миҫе пин ҫын. | Аслӑ хулисем. | Хуласенҫе миҫе пин ҫын. |
|---|---|---|---|---|
| Ангальт . . . . . | 2.294 | 331 | Дессау | 58 |
| Баден . . . . . . | 15.070 | 2.209 | Карлсруэ<br>Мангейм | 136<br>230 |
| Бавария . . . . . | 75.992 | 7.054 | Мюнхен<br>Нюренберг<br>Аугсбург | 631<br>353<br>155 |
| Брауншвейг . . . | 3.672 | 481 | Брауншвейг | 140 |
| Вальдек . . . . . | 1.121 | 66 | Арользен | 3 |
| Вюртенберг . . . | 19.507 | 2.519 | Штутгарт | 309 |
| Гессен . . . . . | 7.688 | 1.291 | Дармштадт<br>Майнц | 82<br>103 |
| Липпе-Детмольд . | 1.215 | 154 | Детмольд | 15 |
| Мекленб.-Стрелиц . | 2.930 | 106 | Ней-Стрелиц | 11 |
| Мекленб.-Шверин . | 13.127 | 651 | Шверин | 45 |
| Ольденбург . . . | 5.429 | 518 | Ольденбург | 33 |
| Пруссия . . . . . | 291.562 | 36.075 | Берлин | 1.903 |
| Саксония . . . . . | 14.993 | 4.663 | Дрезден<br>Лейпциг<br>Хемниц | 529<br>604<br>304 |
| Тюрингия . . . . | 11.763 | 1.508 | Веймар<br>Гера | 37<br>74 |
| Шаумбург-Липпе . | 340 | 46 | Бюккенбург | 6 |
| **Ирӗк хуласем.** | | | | |
| Бремен . . . . . | 256 | 311 | Бремен | 258 |
| Гамбург . . . . . | 415 | 1.050 | Гамбург | 986 |
| Любек . . . . . | 298 | 121 | Любек | 113 |

## IV. Германи хуҫайстви.

Вăрҫă пирки, тата вăрҫă хыҫҫăн пулнă ĕҫҫем пирки Германи хуҫайстви ытла та naђарланса ҫитрĕ.

Германире халĕ вăрҫăђђенхинђен тырă нумай сахал тăваҫҫĕ. Вăл ак ҫак таплитсăран паллă (ку таплитсăра тырра пиншер квинтођпе шутланă; квинтођ = 6 пăт 10 кĕрепенкĕ):

| Ҫулсем. | Тулă. | Ыраш. | Урпа. | Сĕлĕ. | Ҫĕрулми. | Ђĕкĕнтĕр. |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1913 . . | 41.400 | 113.093 | 33.427 | 85.929 | 457.759 | 142.568 |
| 1922 . . | 18.957 | 53,491 | 15.814 | 41.308 | 261.154 | 73.880 |

Выђăх та Германире нумай ђакнă. Пиншер пуҫ шутласан:

| Ҫулсем. | Лашасем. | Ĕнесем. | Сурăхсем. | Кађакасем. | Сыснасем. |
|---|---|---|---|---|---|
| 1913 . . | 4.523 | 20.444 | 5.476 | 3.474 | 25.116 |
| 1921 . . | 3.683 | 16.840 | 5.882 | 4.337 | 15.876 |

Германире вăрҫă хыҫҫăн сахăр кăлармалли ђĕкĕнтĕр нумай кайа ака пуҫланă, ҫавăнпа сахăр та нумай кайа тăва пуҫланă. 1913—14 ҫулсенђе Германире сахăр 2.618 пин тоннă тунă, 1921—22 ҫулсенђе—1.296 пин тоннă анђах. Тимĕр ĕҫĕ те Германире нумай ђакнă. 1913-мĕш ҫулта Германире 19.309 пин тоннă тимĕр тунă, 1921-мĕш ҫулта — 8.000 пин тоннă анђах. Хурҫă 1913-мĕш ҫулта 18.935 пин тоннă тунă, 1921-мĕш ҫулта—9.400 пин тоннă анђах.

Германи маркки йӳнелсе пырса нимĕн тĕшне те тăми пулђĕ. Йут патшалахсенђе вăл марккăшăн халĕ нимĕн те памаҫҫĕ. Вăрҫăђђен толлăршăн (Америк укҫи, ылтăн укҫапа икĕ тенкĕ тăраĭ) $4^1/_5$ маркка параĭђĕҫ, нумай пулмасĭ толлăршан 2.240 мĕђйун маркка параĭђĕҫ, халĕ толлăрсене маркăлла сутмаҫҫĕ те.

Германи туххуђĕ халĕ пит сахал, расхутсене пит сахал саплаĭ. Нимĕҫ социал-демокрађĕ Квессел шутланă тăрăх, 1923 ҫулти йанварте Германире 100 тенкĕ расхутран 23 тенки анђах туххутпа сапланнă, ҫенђапĕр уйăхĕнђе 70 пусĕ анђах сапланнă.

Германийĕн суту-илӳ ĕҫĕ те пĕтсе пыраĭ. 1913 ҫулта Германи йут патшалăхсене 1.474 мĕђйун центнĕр (центнĕр = 3 пăт) сутнă, 1921—22 ҫулсенђе 436 центнĕр анђах. Кăҫал Германи сутуилĕвĕ тата хăвăртрах пĕтсе пыђĕ. Май уйăхĕнђе Германи йут патшалăхсене ылтăн укҫапа шутласан 614 мĕђйун марккăлăх тавар кăларђĕ; йуђре—106 мĕђйун марккăлăх анђах.

# ХӖВЕЛТУХӐҪӖНҪИ ТӖП ИЗДАТӖЛСТВӐН ҪӐВАШ СЕКЦИЙӖ КӐЛАРАКАН КӖНЕКЕСЕМ:

Ҫӑвашла шурналсемпе кӗнекесем пур.

| | | |
|---|---|---|
| **Шурнал „Ӗҫлекенсен Сасси“** | № 3 . . . . . . . . . | 10 пус (ылт.). |
| „ „ „ | № 4 . . . . . . . . . | 10 „ „ |
| „ „ „ | № 5—6 . . . . . . . | 30 „ „ |
| „ „ „ | № 7 . . . . . . . . . | 50 „ „ |
| „ „ „ | № 8 . . . . . . . | 50 „ „ |

## КӖНЕКЕСЕМ:

1) **Коваленко.** Политкрамӑта кӗнеки . . . . . . 20 „ „
2) **Н. Мещеряков.** Канаш Раҫҫейӗнҫи кооперациі . 15 „ „
3) **А. Зубрилин.** Ҫарансем ӳстерӗр.
4) Хресҫенсен Германҫи революци ҫинҫен мӗн пӗлсе тӑмалла.
5) **П. Гуров.** Ҫӗр котӗксӗ (сакунӗ).
6) **Тимухха Хветри.** Тырпул тӑвас ӗҫ.
7) **О. А. Андреев.** Хире паранкӑпа выҫӑхҫӗрлӗхе ҫитерекен тӗрлӗ тымарҫимӗҫ акса тӑвасси ҫинҫен.
8) **О. А. Андреев.** Ҫӗре сӗнетесси ҫинҫен.
9) **А. Скоморохов.** Сӗтлӗ енесене пӗлсӗ суйласси.
10) **А. Зубрилин.**—Как получать большие урожаи хлебов при недостатке навоза.
11) **Его-же.**—Как улучшить крестьянское хозяйство.
12) **Его-же.**—У коровы молоко на языке.
13) **Его-же.**—Трехполье—гибель, спасение в многополье.
14) **Скоморохов А. Л.**—Заразные болезни домашних животных и борьба с ними.
15) **Ф. Энгельс.**—Принципы коммунизма.
16) **Степанов.**—Мысли о религии.
17) **Антонов-Авсеенко.**—Строительство Красной Армии.
18) **Заровнядный.**—Простые беседы по самообразованию.
19) **Ленин.**—О НЭП-е (статьи и речи).
20) **Его-же.**—О просвещении (статьи и речи).
21) **Сейфуллина.**—«Перегной».
22) Устав и программа РКСМ.

# ХЁВЕЛТУХӐҪЁНҪИ ТЁП ИЗДАТЁЛСТВӐН ҪӐВАШ СЕКЦИЙЁ КӐЛАРАКАН КЁНЕКЕСЕМ:

Ҫӑвашла шурналсемпе кӗнекесем пур.

| | | |
|---|---|---|
| Шурнал „Ӗҫлекенсен Сасси“ | № 3 . . . . . . . . . . | 10 пус (ылт.). |
| „ „ „ | № 4 . . . . . . . . . . | 10 „ „ |
| „ „ „ | № 5—6 . . . . . . . | 30 „ „ |
| „ „ „ | № 7 . . . . . . . . . . | 50 „ „ |
| „ „ „ | № 8 . . . . . . . . | 50 „ „ |

## КЁНЕКЕСЕМ:

1) **Коваленко.** Политкрамӑта кӗнеки . . . . . . . . 20 „ „
2) **Н. Мещеряков.** Канаш Раҫҫейӗнҫи кооператси . 15 „ „
3) **А. Зубрилин.** Ҫарансем ӳстерӗр.
4) Хресҫенсен Германҫи революци ҫинҫен мӗн пӗлсе тӑмалла.
5) **П. Гуров.** Ҫӗр котӗксӗ (сакунӗ).
6) **Тимухха Хветри.** Тырпул тӑвас ӗҫ.
7) **О. А. Андреев.** Хире паранкӑпа выҫӑхҫӗрлӗхе ҫитерекен тӗрлӗ тымарҫимӗҫ акса тӑвасси ҫинҫен.
8) **О. А. Андреев.** Ҫӗре сӗнетесси ҫинҫен.
9) **А. Скоморохов.** Сӗтлӗ енесене пӗлсӗ суйласси.
10) **А. Зубрилин.**—Как получать большие урожаи хлебов при недостатке навоза.
11) **Его-же.**—Как улучшить крестьянское хозяйство.
12) **Его-же.**—У коровы молоко на языке.
13) **Его-же.**—Трехполье—гибель, спасение в многополье.
14) **Скоморохов А. Л.**—Заразные болезни домашних животных и борьба с ними.
15) **Ф. Энгельс.**—Принципы коммунизма.
16) **Степанов.**—Мысли о религии.
17) **Антонов-Авсеенко.**—Строительство Красной Армии.
18) **Заровнядный.**—Простые беседы по самообразованию.
19) **Ленин.**—О НЭП-е (статьи и речи).
20) **Его-же.**—О просвещении (статьи и речи).
21) **Сейфуллина.**—«Перегной».
22) Устав и программа РКСМ.



НОРВЕГИЯ
ХРИСТИАНИЯ
ШВЕЦИЯ
ФИНЛЯНДИЯ
ЛАДОЖСКОЕ ОЗЕРО
ГЕЛЬСИНФОРС
ПЕТРОГРАД
ФИНСКИЙ ЗАЛ.
СТОКГОЛЬМ
РЕВЕЛЬ
ДАГО
ЭЗЕЛЬ
ЭСТОНИЯ
НОВГОРОД
ПСКОВ
РИЖСК. ЗАЛ.
СЕВЕРНОЕ МОРЕ
ДАНИЯ
КОПЕНГАГЕН
БАЛТИЙСКОЕ МОРЕ
ЛИБАВА
РИГА
ЛАТВИЯ
МЕМЕЛЬ
ЛИТВА
КОВНО
ВИЛЬНО
КЕНИГСБЕРГ
ДАНЦИГ
ГЕРМАНИЯ
ПОЛЬСКИЙ КОРИДОР
С. С. С. Р.
ВИТЕБСК
МИНСК
ГАМБУРГ
ШТЕТИН
БАРАНОВИЧИ
БЕЛОСТОК
ГОЛЛАНДИЯ
АМСТЕРДАМ
ГАННОВЕР
БЕРЛИН
ГЕРМАНИЯ
ПОЛЬША
ПОЗНАНЬ
ВАРШАВА
БРЕСТ-ЛИТОВСК
ДОРТМУНД
КАССЕЛЬ
БЕЛЬГИЯ
ЛЕЙПЦИГ
ЛОДЗЬ
ЭРФУРТ
ДРЕЗДЕН
ЧЕНСТОХОВ
ЖИТОМИР
ЛЮКСЕМБУРГ
ФРАНКФУРТ
ПРАГА
КРАКОВ
ЛЬВОВ
ЧЕХО-СЛОВАКИЯ
ФРАНЦИЯ
ШТУТГАРТ
ВИННИЦА
КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК
МЮНХЕН
ВЕНА
БЕССАРАБИЯ
АВСТРИЯ
БЕРН
ШВЕЙЦАРИЯ
БУДАПЕШТ
РУМЫНИЯ
ЯССЫ
КИШИНЕВ
ГРАЦ
ВЕНГРИЯ
ИТАЛИЯ

Центральное Восточное Издат-ство при НКН.

МОСКВА, НИКОЛЬСКАЯ, 10.

ЧУВАШСКАЯ СЕКЦИЯ.

«Что должен знать каждый крестьянин о Германской революции».—Перев. **Ф. Н. Сергеева.**